## СИКТĔРМЕ КĔВВИСЕМ

I

П. Хусанкая асăнса

Мерттес! Çакна чунтан эп кĕтрĕм,
Умра — пилешлĕ Сиктĕрме!
Пуçа таяп:— Эп,— тетĕп,— çитрĕм...
Анса ларатăп çереме.

Хăçан кайса курас-ши теттĕм,
Час-час шутлаттăм ун çинчен.
Паян ак çитрĕ ман тивлетĕм —
Шывне ĕçетĕп çăлĕнчен.

Кунта вăй-хал поэтăм пухнă,
Кăкланă, каснă тунката.
Кунтан инçе çула вăл тухнă,
Сырса вĕр-çĕнĕ çăпата.

...Ыраш вырать ача кăч-кăчăрт!
Сасси янравлă çĕн çурлан.
Курап: ырса тӳнет вăл кăшăрт,
Çĕмел патне çитсе аран.

Пушанчĕ вăл... Тытать хаваслăн
Кĕçех хаçат та кĕнеке.
Хаçат çинче хресчен араслăн:
— Сыхлар,— тет,— аслă Ирĕке!

Сунтал шаккать йыхравлăн тимĕрç,
Ирех вутпа çиçет лаççи.
— Улпут йăхне кар тăрăр хирĕç!
Пирте Çĕн пурнăçăн уççи!

Ялтан тухать аттесĕр тăлăх,
Хыçне вăл çакнă кутамкка.
Тус-йыш, вăрман сунать, ав, пулăх —
Çул тытнă сăвăç аякка.

Куçне шăлса тăрать ун амăш
Хурланчăк хурăн çумĕнче.
Салхуллă улăхĕ — Утламăш,
Кĕтÿçĕ кайрĕ ялĕнчен.

... Янрать йăл илнĕ сăвă-юрă
Çĕн кун пилленĕ хевтипе.
Ăна нихçан та ĕнтĕ урăх
Касаймĕ пусмăр пурттипе.

II

Сиктĕрме таврашĕ симĕс тумлă,
Сиктĕрме уй-хирĕ сарă хумлă.
Акăш пек ярпайлă хĕрĕсем,
Çич çырулла — сарă тĕррисем.
Çийĕ-пуçĕ — кĕмĕл те сăсар,
Куç хывмасăр иртмĕ йĕкĕт-ар.



Çавăнпа илемлĕ Сиктĕрме,
Çавăнпа туй-çуйлă Сиктĕрме.

Сиктĕрме чăвашĕ çăлтăр чунлă,
Сиктĕрме чăвашĕ харсăр юнлă.
Улăп вăйĕ пур-тăр хевтинче,
Ун илемĕ пур-тăр сăнĕнче.
Çийĕ-пуçĕ — кĕмĕл те сахъян,
Юрăпа та чунĕпе пуян.
Çавăнпа-çке паллă Сиктĕрме,
Çавăнпа-çке сумлă Сиктĕрме.

## ЭПИР КУÇ ХЫВНĂ ХĔР...

(Халăх юрри майлă)

III

Çÿпçелĕх * умĕнче хĕрсем лараççĕ,
Хĕрсем лараççĕ, туй çитти тăваççĕ,
Сурпан тĕрлеççĕ, чĕнтĕр çавăраççĕ,
Вăлтавлă каччăсем пăхса тăраççĕ.
Эпир куç хывнă хĕр çиттилĕ теççĕ,
Эпир тĕсенĕ хĕр сурпанлă теççĕ.
Эпир суйланă хĕр Çĕнкас та урлă,
Çĕнкас та урлă, çичĕ килĕ урлă.
Эпир сăнанă хĕр пикеç те ятлă,
Эпир илес те хĕр ялта мухтавлă.
Эпир куç хывнă хĕр тăвать халь тĕрĕ,
Эпир юратнă хĕр хывтарнă çĕрĕ.
Утти-кулли пикеçĕн пит илемлĕ,
Çĕрри-сулли пикеçĕн çут селемлĕ.

---

* Çÿпçелĕх — тумтир, ать-пушмак, çăматă усрамалли шурă кĕлет е унти пĕр пÿлĕм. (Автор.)

Мерченлӗ ҫӳҫӗ яванса ун ӳснӗ,
Йӗленӗ ҫийӗн ҫавранса ун ӳкнӗ.
...Ҫӳпҫелӗх умӗнче хӗрсем лараҫҫӗ,
Хӗрсем лараҫҫӗ — туй ҫитти тӑваҫҫӗ.

❋

Чупса антӑм Ӗнче хӗррине,
Выртса ӗҫес терӗм эп шывне...
Халӑх юрринчен

IV

Шавларӗ ҫумӑрпа Ӗнче.
Хӗвел кулать халь ял ҫинче.
Ҫуталчӗ ҫывӑхри вӑрман,
Хӑлаҫланать кӑвак арман.
Хӗрсем пуҫларӗҫ юрлама,
Тӑраҫҫӗ утӑ тавӑрма.
«Ӗнче пушмак, кӗрен чӑлха...»
Янратрӗҫ хӳхӗм улӑха.
Сӑнатӑп эп, Хиръен ҫынни,
Йӗри-тавран куҫа илми.
Сӑртран курнаҫҫӗ икӗ ял —
Ҫич каслӑ икӗ Питтӑпаль.
Лере, ав, Питтӑпай хӑртни,
Пӑян тӳпи, Тикеш сарни...
Сар кун тӗнчи пек Сиктӗрме —
Пуҫтарнӑ пӗтӗм илеме.
Ума тухать халь ун ачи —
Чӑваш сӑввин пулас элчи.
Ҫерем ҫинче чупать ҫарран,
Ирпе килет, ав, выртмаран.
Ялт каҫӑртса кӑтра пуҫне,
Ыр ҫул сунать хурсен йышне.